Çулсем çинчи хăрушсăрлăхшăн

Ачасен пурнăçĕ вăхăтсăр ан татăлтăр

Пурте пĕлетпĕр, çулсем çинче хальхи вăхăтра тĕрлĕрен инкек-синкексем тăтăшах пулаççĕ. Çынсем суранланасси, вилесси те час-часах. Çитменнине çулсем çинчи инкексене ачасем лекесси ўссе пыни пурне те шухăшлаттарма тивĕç: патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн ĕçченĕсене те, учительсене те, ашшĕ-амăшне те.

Районта та ку енĕпе лару-тăру йывăррисенчен пĕри. Иртнĕ çул çак вăхăтра çулсем çинче ачасемпе çыхăннă инкексем 2 пулнă пулсан, кăçал вĕсем 8-а çитрĕç. Апла пулсан ку енĕпе çине тăрса ĕçлес пулать.

Çавна шута илсех ĕнтĕ ачасен çул-йĕр çинчи хăрушсăрлăхĕ енĕпе 2008 çулхи августăн 20-мĕшĕнчен тытăнса сентябрĕн 20-мĕшĕччен уйăхлăх иртрĕ. Унта хутшăнса Сосновкăри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулта туса ирттернĕ ĕçсем пирки воспитательсемпе учительсем, шкул ачисем хăйсем каласа параççĕ.

Сентябрĕн 16-мĕшĕнче ачасем кĕске вăхăт пурăнмалли ушкăнра «Çулсем çинчи хăрушсăрлăх» темăпа утренник иртрĕ. Ушкăн воспитателĕ Е.В. Максимова ертсе пынипе ачасем мероприятия мĕнле иртни пирки каласа пачĕç.

Эпир шкулта чи кĕçĕннисем, пĕрремĕш класра вĕренме тытăнма хатĕрленекенсем. Апла пулин те шкул пурнăçне активлă хутшăнатпăр. Куллен атте-аннесемпе тата пичче-аппасемпе пĕрле шкула килетпĕр тата киле каятпăр. Шкула килнĕ чухне çул çинче тĕрлĕрен знаксем куратпăр. Мĕнле знаксем-ха вĕсем?

Паян пирĕн пата шкула хăнана милиционер килчĕ. Вăл хăйĕнпе пĕрле çулйĕр знакĕсем илнĕ. Кашни знак мĕне пĕлтернине каласа пачĕ вăл. Çул çинчи тĕп пулăшуçă – светофор та пулчĕ. Эпир те светофорсем ўкертĕмĕр.

Çул çинче хăйсене мĕнле тытмаллин темипе кĕске вăхăт пурăнмалли ушкăна çўрекенсемпе тĕрлĕрен мероприятисем ирттертĕмĕр. «Дядя Степа – милиционер» мультфильм пăхрăмăр. Уçăлма тухсан çул-йĕр знакĕсемпе паллашрăмăр. Милиционера ачасемпе занятисем ирттерме чĕнтĕмĕр. Çул çинче хăйсене мĕнле тытмалли пирки ачасемпе практикăлла занятисем те пулчĕç.

Е. МАКСИМОВА,
ачасем кĕске вăхăт пурăнмалли ушкăн воспитателĕ.

1-мĕшпе 3-мĕш классенче «Светофор патĕнче хăнара» темăпа класс сехечĕ пулчĕ. Ку вăл çул-йĕр знакĕсен ячĕсене астуса юлма, çул урлă мĕнле каçмаллине аса илме, астăвăма аталантарма пулăшать т. ыт. те. Калаçава пĕрремĕшпе виççĕмĕш классен ертўçи А.И. Белова пуçларĕ. Ачасем светофор пирки сăвăсем вуларĕç, «Хĕрлĕ, сарă, симĕс» вăйă ирттерчĕç, çул урлă каçмалли правилăсемпе, знаксемпе паллашрĕç, тренинг упражненийĕсем ирттерчĕç, викторина ыйтăвĕсем çине хуравларĕç.

А. БЕЛОВА,
1-мĕшпе 3-мĕш классен ертўçи.

Сентябрĕн 6-мĕшĕнче 2-мĕшпе 4-мĕш классене çўрекенсемпе «Мĕншĕн урамра хăрушă?» ятпа экскурси пулчĕ. Кунта эпир çул урлă каçассин правилисене пĕлнине çирĕплетрĕмĕр. Сентябрĕн 15-мĕшĕнче вара «Мĕнле майпа тĕрĕс пассажир пулмалла?» темăпа класс сехечĕ пулчĕ.

Н. ФЕДОРОВА, В. ИПАТЬЕВА,
2-мĕшпе 4-мĕш классен ертўçисем.

5-мĕш класра вĕренекенсемпе çулсем çинчи хăрушсăрлăх правилин ыйтăвĕсемпе калаçу иртрĕ. Сентябрĕн 8-мĕшĕнче вара харпăр хăйĕн хăрушсăрлăхĕпе викторина пулчĕ. Кунпа пĕрлех «Çул-йĕр знакĕсен çĕр-шывне – çул çўрев» мероприяти те аван иртрĕ.

Елена ВАСИЛЬЕВА,
5-мĕш класра вĕренекен.

Ачасен хăрушсăрлăхĕн уйăхлăхĕ шучĕпе 7-мĕш классемпе сентябрĕн 8-мĕшĕнче «Что? Где? Когда?» телевикторина евĕр «Перекресток» викторина ирттертĕмĕр. Сентябрĕн 15-мĕшĕнче вара «Хăрушсăрлăх азбуки» ятпа класс сехечĕ пулчĕ. Кунпа пĕрлех ачасем çул çинче тимлĕхсĕр пулнипе инкексем пулни пирки чăваш чĕлхин урокĕнче диктант çырчĕç.

Игорь ИВАНОВ,
7-мĕш класра вĕренекен.

Уйăхлăх вăхăтĕнче 8-мĕш класра ашшĕ-амăшĕсен пухăвĕ иртрĕ. Класпа пĕрле Шупашкарта пултăмăр. Класс ертўçи З.А. Антонова çул урлă мĕнле каçмалли пирки тĕплĕ ăнлантарса пачĕ. Сентябрĕн 8-мĕшĕнче класра «Шкула çитмелли çул» вăйă ирттертĕмĕр.

Галина КИРИЛЛОВА,
8-мĕш класра вĕренекен.

9-мĕш класра вĕренекенсемпе нумаях пулмасть каласава аталантармалли урок иртрĕ. Унта вĕсем «Манăн хăрушсăрлăх – манăн алăра» сочинени çырчĕç. Унччен вара вĕсем çулсем çинче пулнă тĕрлĕ инкексене тишкерсе хак пачĕç. Çулсем çинче тимлĕ пулмаллине, пушар хăрушсăрлăх правилисене пăхăнмаллине пысăка хурса палăртрĕç.

Женя МИХАЙЛОВА,
9-мĕш класра вĕренекен.

Истори страницисем

Сăвăç шăпи

Роман Иванов пирĕнтен уйрăлса кайнăранпа 70 çул çитнĕ май

(Вĕçĕ. Пуçл. иртнĕ номерте).

Çак сăмахсем хыççăнах хăйĕн пурнăçĕ лайăхланасса шанать вăл.

«Но все миновало, промчалась гроза,
Вновь буря сменяла погода.
И вновь устремлял я невольно глаза
На горькую долю народа...».

Вăтăрмĕш çулсенче ĕçе илме ыйтса Сĕнтĕрти РОНО-на заявлени панă (ун чухне Муркаш районĕ пулман). Заявлени çине «В совершенстве владею немецким языком» тесе çырнă. Ана вăл çулсенче РОНО-ра ĕçленĕ Кĕркури кукка вуланă пулмалла. Ку сăмахсене эпĕ куккасем патĕнче пулнă чухне темиçе хут та илтнĕччĕ.

Кайран Муркаш шкулĕнче нимĕç чĕлхин учителĕ пулса ĕçлеме тытăнать. Анчах та нумаях ĕçлеймен пулас. П.Т. Тимофеев (вăл халĕ пирĕнпе çук) каласа панă тăрăх, урок вăхăтĕнчех шкул директорĕпе А.А. Шишкинпа форма тăхăннă çын (НКВД ĕçченĕ пулнă пулас) Роман Ивановича илсе тухса кайнă. П.Т. Яранский (нумай вăхăт Нискассинче шкул директорĕнче ĕçленĕскер) Муркаш шкулĕнче вĕреннĕ чух Хорнуйĕнче амăшĕн тăванĕсем патĕнче хваттерте пурăннă. П.Т. Тимофеев вĕсем тăванĕ. Вĕсем Роман Иванович çинчен каласма пултарнă. П.Т. Тимофеев каласа панă тăрăх шкул ачисем Роман Ивановичран: «Çăпата нимĕçле мĕнле пулать?»– тесе ыйтнă. Роман Иванович: «Нимĕçсем çăпата мĕнне пĕлмеççĕ, унта вăл пачах çук»,– тесе хуравланă. И.Д. Вязов каланине эпĕ хирĕçлеместĕп. «Нимĕçсен улăм витнĕ çуртсем пур-и?»– тесе ыйтсан вăл: «Нимĕçсен улăм витнĕ çуртсем çук»,– тесе ответленĕ.

Шкулта вĕренекенсем нимĕçсем патĕнче пурăннă çынран тĕрлĕ ыйтусем çине ответ кĕтнех пулĕ. Нумай ыйтусем çине хуравланă вăл. Анчах мана çакă шухăшлаттарать: вĕренекенсем хушшинче те «стукачсем» пулнă пулмалла. Ун чухне НКВД системинче «осведомительсем» (халăх хушшинче «стукачсем» тенĕ) питĕ йышлă пулнă. Кашни ялтах, кашни коллективрах пулнă вĕсем. Пĕри мана çичĕ çынлă коллективрах хăй «стукач» пулни çинчен тата ертўçĕ çинчен çырнă хыççăнах вăл çухални çинчен мухтанса каласа панăччĕ. Тата хамăн асаттене те пĕр урамри çынах «сутни» çинчен пĕлетĕп.

Роман Ивановича шкултан илсе тухсан Вăрманкасра ухтару пулнă. Нумай ал çырăвĕсем, кĕнекесем туртса илнĕ. Хăйне арестлесе пĕрлех илсе кайнă. 37 çул каялла Якур пиччĕшĕпе пĕрле кайнă çулпах, 1938 çулхи февральте çунапа. Ку хутĕнче тăван енпе ĕмĕрлĕхех сыв пуллашма тивнĕ. Роман аса илнех ĕнтĕ 37 çул каялла çырнă «Прощание с Родиной» сăввине. 37 çул каялла çырни чăннипех пулса тухнă. 37 çул темĕнле асамлă вăхăт (Пушкин, Рафаэль, Понеченко тата нумай паллă çынсем).

Нимĕç шпионĕ тесе айăпланă ăна. Тĕлĕнтерет: Вăрманкасра çар объекчĕсем пулнă-ши? Следовательсем хăйсем те çухалса кайнă. Кайранхи документсенче Японн шпионĕ тесе те асăннă.

1989 çулхи августăн 14-мĕшĕнче унăн таса ятне тўрре кăларакан документра çапла çырнă: «Иванов Р.И. обвинялся в контрреволюционной деятельности в пользу Японской разведки, в пропаганде и восхвалении фашисткого строя в Германии и создании фашистской группы из числа служителей религиозного культа, которые по его указанию якобы создавали повстанческие группы на случай войны Германии против Советского Союза. Однако доказательств вины Иванова Р.И. в указанной преступной деятельности в материалах дела не имеется».

Ирĕксĕрех мана ача чухнехи вăрçă вăхăтĕнчи пурнăç аса килет. Ун чухне пĕтĕм ĕçсене хĕрарăмсемпе ачасем тата ватă çынсем пурнăçланă. Апла пулин те уйăсем хальхи пек çум айне путман. Тыр-пул туса илессин йĕрки те улшăнчĕ. Ун чухне август пуçламăшĕнче çурлапа тырă вырма тухатчĕç. Ку ĕçе пире те, ачасене, хутшăнтаратчĕç. Аван çапма пуçласан вара ачасемех аван çапаттăмăр. Ун чухне 5-мĕш класран пуçласа вĕренекенсен вĕренў çулĕ октябрĕн 1-мĕшĕнче кăна пуçланнă.

Молотилкăпа аван çапнă. Ана ĕçлеттеренекен «перевода» виçĕ лашапа çавăрнă. Молотилка хыçĕнчи вăрăм сĕтел çине ачасем машинист патне конвеер пек кĕлтесем куçарса тăнă. Машинист вара кĕлтесене молотилка барабанĕ витĕр кăларса тырă шĕкĕлченĕ.

Çавăн пекех пуль 1930–1940 çулсенче вилĕм конвеерĕ нумай айăпсăр çынсене «молох» çăварне çăтнă. Çĕршер-пиншер мар, миллионшарĕпе «молох» барабанĕ çынсен шăпине татнă. 1938 çулхи сентябрĕн 22-мĕшĕнче Роман Ивановича персе вĕлернĕ. Хыççăн ылтăн шăлне кăларса илнĕ.

Вăрçă пуçланичченех фашистсем хамăр патрах пулнă пулмалла. 1937 çулта, çулла, Чăваш Республикине Мускавран план ярса панă: «Çулталăк вĕçленичченех 1800 «халăх тăшманне» арестлемелле, вĕсенчен 300-шне персе пăрахмалла».

Ку конвеер кайранхи çулсенче те, Сталин виличчен, чарăнман. 8 çул тыткăнра пурăннă чух ют çĕрте

«Грозило не раз с невинной душой
Погибнуть на плахе кровавой»

тесе шутланă пулсан, киле таврăнсан йывăр вăхăтсем иртсе каясса ĕмĕтленнех пулĕ. Çавăнпа та «Но все миновало, промчалась гроза...» тесе çырнă Роман «Фатима» поэминче. Çук çав! Унăн пурнăçне нимĕçсем мар, киле таврăнсан пĕр чăвашах татнă пулĕ.

М.Г. Матросова тата Р.В. Иванова Роман Иванов çинчен «Киле таврăнсан. Роман Иванов сăвăç шăпи» кĕнеке кăларса пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç турĕç. Репресси вăхăтĕнче çыннăн пурнăçĕ ним айăпсăр татăлни пирки пĕлтерме тата ун çинчи хура элеке сирме пулăшрĕç. НКВД материалĕсен пĕтĕм вăрттăнлăхне сирсен, архивсенче Роман Иванов çинчен çĕнĕ документсем тупăнсан тата вăл ĕçленĕ вырăнсене тупса палăртсан, вĕсем пысăкрах тиражпа çĕнĕ кĕнеке кăларасса шанас килет.

Н. ЕРШОВ.

Çуралнă кун

Ветеран 82 çулта

Августăн 1-мĕшĕнче Каршлăхри ваттисен çуртĕнче вăрçă участникĕнне Илья Степанович Лакштанкинăнне çуралнă кунне паллă турăмăр. Вăл 82 çул тултарчĕ. И.С. Лакштанкин Мордва Республикинчи Старое Ардатово ялĕнче çуралнă. 1934 çулта вĕсем Улатăр хулине куçса килнĕ. 1941 çулта Канашри чукун çул деповĕнче ĕçлеме тытăннă.

1943 çулта Илья Степановича вăрçа илсе каяççĕ. Минск хулине 2-мĕш Белорусси фронтне лекет вăл. Йывăр аманать. Госпитальте сипленнĕ хыççăн Илья Степановича Германие ăсатаççĕ, унтан Польшăна та çитет вăл.

1945 çулта ăна пĕрремĕш сывлăш çарне истребительсен дивизине поварта ĕçлеме илеççĕ. Киле вара 1950 çулта таврăнать. Тĕрлĕ организацисенче водительте ĕçлет.

1955 çулта авланнă, анчах вĕсен пĕр ача та пулман. 1998 çулта пачах куç курми пулса ларать. Вăл халĕ 1-мĕш ушкăн инваличĕ. 2007 çулта юратнă мăшăрĕ те çĕре кĕрет.

Халĕ вара Илья Степанович 2008 çулхи февралĕн 4-мĕшĕнчен тытăнса пирĕн патра ветерансен çуртĕнче пурăнать. Ана кунта питĕ килĕшет. Çуралнă кунĕ ячĕпе эпир ăна сĕтел хатĕрлесе пысăк кукăль пĕçерсе патăмăр, пĕчĕк концерт та хатĕрлерĕмĕр. Пурте ăна нумай-нумай çул пурăнма ырлăх-сывлăх сунчĕç.

В. КРЮЧКОВА,
ваттисен çурчĕн культоргĕ.

Хаçатра çырни патне таврăнса

Этем тени этемех пултăр

Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçатăн 44-мĕш номерĕнче О. Тарасовăн «Хăçан хамăра хисеплеме вĕренетпĕр» статйи пичетленсе тухнăччĕ. «Мĕнле те пулсан çынран лайăхрах пурăнас, кўршĕрен маларах ĕлкĕрес тесе этем сăнĕнчен тухсах пыратпăр пек туйăнать», - тесе çырать хăйĕн статйинче О. Тарасов учитель.

Унăн статйине вуланă хыççăнах акă мĕнле калаçу илтме тўр килчĕ мана Шупашкара автобуспа кайнă чухне. Юнашар ларакан арçын сăмах пуçларĕ. Çĕртме уйăхĕн вĕçĕнче ывăлĕ отпуска тухсан вĕсем хăйсен кил хушшинчи сарай тăррине пĕр еннелле – анкартинелле шыв юхмалаллă тума тытăннă. Малтан икĕ еннелле пулнă май кил хушшине юр нумай пухăннă, утса çўреме чăрмантарнă. Ĕçленĕ чухне хăмасем кирлĕ пирки анкартинчи мунча çумне купаланă кивĕ хапха хăмисене илме кайнă.

Ак хайхи! 10–15 хăмаран турат куçĕ тĕлĕнчен хуçăлнă пĕр хăма кăна выртать иккен. Çакскер сăнама, йĕрлеме тытăнать. Кўршĕн çĕрĕшнĕ карти тайăлса тăрать. Çулман курăк тăрăх йăп-йăп пусса виктори çырли ани хĕррипе пĕчĕк утма çулпа пахча çимĕç йăранĕсем хушшипе тепĕр кўршĕ карти патне çитсе тухать. Карти пралукран, урлă каçаймăн.

Унти сукмак вĕсен сарайĕ патне илсе тухать. Ак хайхи! Кусем те юсав ĕçĕсем туса ирттереççĕ, сарай тăррине улăштараççĕ иккен. Ку вара кил хуçи патне кĕрет те платниксем камсем пулнипе интересленет, кунталла йĕр килни пирки калать. «Ара эпĕ улмуççисем пăхрăм вĕт»,– тет хайхи. Йĕрĕ вара улмуççисем патне пымасть те.

Çакскер арăмĕ патне каять. Лешĕ урăх çĕрте пулнă май, иккĕшĕ кун пирки курса калаçайман пулас. «Эпĕ кўршĕ хĕрарăмне эрех леçсе патăмччĕ, мухмăрлаччĕ те»,– тет ку. Курăк урлă утмасăрах кайма май пурри пирки шарламасть те.

Арçын платниксем камсем пулнипе кăсăкланать. Кунта çемье подрячĕ текен йĕркепе ĕçленĕ иккен. Йăмăкĕн ывăлĕ, вĕсен шăллĕ пĕрле пулса çемье подрячĕпе хăмасем сĕтĕрнĕ пулас.

Чимĕр-ха,– тет автобус çинчи çак арçын. – Вĕсен амăшĕ хамăр ялта, аппăшĕ юнашар ялта çынсенне, колхозăнне, вăрмантан ĕмĕр тăршшĕпех мĕн алла лекнĕ çавна килелле сĕтĕрнипе «чапа» кĕрсе юлнă вĕт-ха. Унтан та маларахри йăхĕ çинчен юнашар ялти ватăсем пĕлеççĕ пулĕ. Хальлĕхе вара вĕсен виççĕмĕш сыпăкĕ вăрă йăхне тытса пырать иккен.

Çапла çав, пурнăçра пĕрре кăна пурăнатпăр та, апла пулин те хамăра йĕркеллĕ тытма пĕлместпĕр хăш чухне. Хамăр хыççăн çакăн пек «ырă ят» хăварас марччĕ.

Н. ПЕТРОВ,
ĕç ветеранĕ.

Нискасси ялĕ.

Вулакан пултарулăхĕ

Телейлĕ çул

Умра çул уçă пулмасассăн
Пурăнас кăмăл та килмест,
Çумра тус-мăшăр утмасассăн
Вĕç-хĕрсĕр çул та кĕскелмест.

Çўлти асамлăх сўнмесессĕн
Ирĕкре сирĕншĕн тўпе,
Хĕрў тасалăх упрансассăн
Чĕресем тулĕç телейпе.

Хăват çут çăлтăр парнелетĕр
Юратăвăра упрама,
Тўлек çилсем тек çупăрлаччăр
Çывăхлатма туйăмăра.

Çак ырă кунăн пархатарĕ
Вăй-хăват сунтăр малашне,
Хĕвел ăшши çĕн пурнăç парĕ
Малашлăхра чĕресене.

Тамара МИХАЙЛОВА.

Вăçкасси ялĕ.